Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

95-96 (8056-8057) №№ ✻ *Шăмат кун, 2012 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 8-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

## Çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатаççĕ



***Пирĕн районти черетлĕ тăватă çемье пурăнмалли çурт-йĕр хăпартма е хваттер туянма патшалăх енчен паракан социаллă тӳлеве тивĕçрĕ. Декабрĕн 4-мĕшĕнче вĕсем çакна çирĕплетекен свидетельствăсене алла илчĕç. Хорнуй ял тăрăхĕнчи Герасимовсем, Оринин ял тăрăхĕнчи Семеновсем, Турай ял тăрăхĕнчи Кирилловсем тата Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Сидоровсем тивĕçнĕ социаллă тӳлевĕн пĕтĕмĕшле сумми 2035254 тенкĕпе танлашать.***

***Семеновсемпе (сăн ӳкерчĕкре сулахайра) Кирилловсем (сылтăмрисем) патшалăх пулăшăвне тивĕçме пултарнăшăн питĕ савăннине, ăна тахçантанпах кĕтнине пĕлтерчĕç. Район администрацине тав тунă май çак тӳлевпе ипотека кредитне саплаштарма усă курассине каларĕç.***

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

## «Тĕп çул-йĕр паллă. Ĕçе пикенес пулать»

**Ларуран**

**Çапла тĕв турăç депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 23-мĕш ларăвне хутшăннисем районăн 2013 çулхи тата планланă 2014 – 2015 çулсенчи тапхăрти бюджетне йышăннă май.**

Лару декабрĕн 6-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче иртрĕ. Унта район администрацийĕн структура подразделенийĕсен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, районти предприятисемпе организацисен тата учреждениесен ертӳçисем, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен директорĕсем, çамрăксен парламенчĕн членĕсем хутшăнчĕç.

Лару савăнăçлă самантран пуçăнчĕ темелле. Ларăвăн кун йĕркине çирĕплетиччен депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ Игорь Николаев тата унăн çумĕ Валерий Вязов çамрăксен парламенчĕн членĕсене савăнăçлă лару-тăрура удостоверенисем пачĕç.

Депутатсем ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртрĕç: «Депутатсен районти Пухăвĕн 2011 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнчи С-12/3 № «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн 2012 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен», «Муркаш районĕн 2013 çулхи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн прогнозĕ çинчен», «Депутатсен районти Пухăвĕн «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн 2013 çулхи тата планланă 2014 – 2015 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен» йышăнăвĕн проекчĕ çинчен», «Газ хуçалăхĕн объекчĕсене Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнчен Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхне тӳлевсĕр парасси çинчен», «Депутатсен районти Пухăвĕн 2013 çулхи ĕç планĕ çинчен».

Пĕрремĕш ыйтупа райадминистрацин финанс пайĕн пуçлăхĕ Рената Ананьева тухса калаçрĕ. Укçа-тенкĕ шайлашăвне шута илсе депутатсем кăçалхи бюджета хăш-пĕр улшăнусем кĕртме килĕшрĕç.

Муркаш районĕн 2013 çулхи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн прогнозĕпе райадминистрацин экономика тата агропромышленноç комплексне аталантарассин пайĕн пуçлăхĕ Нина Костина паллаштарчĕ. Хальхи вăхăтра районĕпе пĕтĕмĕшле промышленноç продукцийĕ туса хатĕрлессипе «Сеспель» предприяти тӳпи 81 процентпа танлашать. Асăннă предприятите, Муркашри кирпĕч завочĕпе сĕтçу завочĕ те çитес çул валли пысăкрах чикĕсем палăртаççĕ. Çав вăхăтрах «Моргаушавтотехсервис», «Моргаушкорм» хăйсен производство кăтартăвĕсене чакарса пыни йĕркеллĕ пулăм мар.

Районĕпе пĕтĕмĕшле туса илекен ял хуçалăх продукцийĕн калăпăшĕнче уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсем 68 процент, ял хуçалăх предприятийĕсем 27 процент, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 5 процент йышăнаççĕ. Вĕсен те производствăна аталантарассипе çине тăрса ĕçлени кирлĕ.

Районăн 2013 çулхи тата планланă 2014 – 2015 çулсенчи тапхăрти бюджечĕн проекчĕпе финанс пайĕн пуçлăхĕ Рената Ананьева паллаштарчĕ. Каласа хăвармалла, ăна йышăнассин ыйтăвне ларăвăн кун йĕркине кĕртиччен бюджет проектне яланхи комисси ларăвĕнче те, халăхпа та сӳтсе явнă, «Вестник Моргаушского района» хаçатра пичетлесе кăларнă, район администрацийĕн сайтĕнче вырнаçтарнă.

Çапла вара депутатсем тĕплĕ сӳтсе явнă документа йышăнчĕç. Районăн 2013 çулхи бюджечĕ тупăшсем енĕпе 386534,4 пин тенкĕпе танлашать. Вăл шутран районăн хăйĕн тупăшĕ – 116508,9 пин тенкĕ е 30 процента яхăн. Районăн çитес çулхи тăкакĕсене 391343,9 пин тенкĕ палăртрĕç. Бюджет дефициčĕ – 4809,5 пин тенкĕ. 2015 çул тĕлне районăн хăйĕн тупăшĕ 34,1 процент пулмалла. Республика бюджетĕнчен трансфертсем уйăрасси чакса пырать. Çавна май тăкаксене чакарасси, тупăш илмелли çĕл куçсемпе анлăрах усă курасси, производствăна аталантарасси малти вырăна тухать. Кунпа пĕрлех культурăпа вĕрентӳ учрежденийĕсем, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем республикăри тата федераллă тĕрлĕ программăсене анлăрах хутшăнни, çапла майпа хăйсене укçа-тенкĕпе тивĕçтерме пултарни те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

«Газ хуçалăхĕн объекчĕсене Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнчен Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхне тӳлевсĕр парасси çинчен» ыйтупа пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ Илья Захаров пĕлтернине итлерĕç. Депутатсем район харпăрлăхĕнче шутланакан газ хуçалăхĕн 85 объектне республика патшалăх харпăрлăхне пама сасăларĕç.

Депутатсем çавăн пекех депутатсен районти Пухăвĕн 2013 çулхи ĕç планне пăхса тухса çирĕплетрĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Республикăра**

## Журналист этикин ыйтăвĕсем тавра

Декабрĕн 4-мĕшĕнче Чăваш Республикин Обществăлла палатинче республикăри тата районсенчи массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсем палата представителĕсемпе çавра сĕтел хушшинчи усă калаçăва пухăннă. Пĕрлехи лару ĕçне республика информполитика министрĕ Валентина Андреева, Ольга Денисова ертсе пынипе Обществăлла палата представителĕсем, Роскомнадзорăн Чăваш Енри Управленийĕн ертӳçи Юрий Романов, журналистсен республикăри союзĕн председателĕ Валерий Комиссаров хутшăннă. Тĕл пулура информаци политикин тата журналист этикине пăхăнассин ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.

**Хамăр инф.**

## Юн кунсенче, 8 сехет çурăра

Хаçат вулакансем Чăваш Наци радио хумĕсем çинче кăçалхи июлĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа кашни ытлари кун 6 сехет çурăра Муркаш çĕнĕрен «калаçма» пуçланине пĕлеççĕ ĕнтĕ. Кăçал çак 25 минута тăсăлакан радиопередача 17 хутчен радио итлекенсем патне çитме те ĕлкĕрчĕ.

Ку таранччен килнĕ телефон шăнкăравĕсем, хамăр районта пурăнакансем вăл е ку мероприяти вăхăтĕнче хăйсене радиопередачăсем килĕшни çинчен пĕлтерни вара çакăн çинчен калаççĕ: Муркашсене район çыннисем те, ытти районсем те юратсах итлеççĕ.

Тавах сире, радио итлекенсем, кашни юн кун район хыпарĕсене кăмăлласа йышăннăшăн. Çакă ĕçлеме татах та хавхалантарать. Радиопередача интереслĕрех тухтăр тесе малашне те хамăртан килнине йăлтах тума тăрăшăпăр. Тата эсир пулăшасса та шанас килет, хăвăр ялти ырă ĕçсемпе, пултаруллă çынсемпе паллаштарас тетĕр пулсан шăнкăравлăр, кĕрсе тухăр район администрацине.

Халĕ вара çакăн çинчен пĕлтерес тетĕп. Иртнĕ эрнерен пуçласа Муркашсен эфира тухмалли вăхăчĕ улшăнчĕ. Малашне Муркаш юн кунсенчех, анчах малтанхи пек ирхи 6 сехет çурăра мар, 8 сехет те 30 минутра «калаçма» пуçлать. Эппин, эфирта тĕл пуличчен.

**Л. ТУКТИНА.**

**Пулни-иртни**

## Çил-тăман «тĕрĕслет»

Иртнĕ кунсенче Мускав, Санкт-Петербург таврашĕнче тата ытти хăш-пĕр вырăнсенче çил-тăман епле алхасни, çулсем çинчи пăтăрмахсем пирки пĕлетпĕр ĕнтĕ. Пире те айккинче пăрахса хăвармасть пулас ку çанталăк. Декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнче ялсенче тăтăшах электричество сӳннĕ тĕслĕхсем пулкаларĕç.

Муркаш районĕн пĕрлехи диспетчер службипе çыхăнса çавна палăртма май килчĕ. Чăнах та кун пек тĕслĕхсем пулнă. Акă декабрĕн 1-мĕшĕнче 15 сехет те 2 минутран тытăнса 16 сехет те 15 минутчен Лантăш, Оринин, Çеменкасси, Муркаш ялĕсенче, çав кунах 17 сехет те 15 минутран тытăнса 22 сехет те 5 минутчен Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Кӳстерек, Шурча, Шуркасси ялĕсенче электричество пулман.

Декабрĕн 4-мĕшĕнче кун пек пăтăрмах каллех пулнă. Вăйлă çиле тата электролини çине юр сырăннине пула вăл татăлнипе 19 сехет те 10 минутра харăсах Муркаш, Оринин, Ярапайкасси тата Çатракасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенчи ялсенче çутă сӳннĕ. Муркашпа Çатракасси ял тăрăхĕсенче 21 сехет те 45 минут тĕлне, Орининпа Ярапайкасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенче ир енне ялсене электричество парса тăрассине йĕркене кĕртме май килнĕ.

Сăлтавĕ çĕнĕлĕх мар. Электричество линийĕсем ытларах çĕрте 30 – 40 çул каялла карнăскерсем. Аварисене вăхăтра пĕтерес тĕлĕшпе ятарлă службăсем оперативлă ĕçленине палăртма кăмăллă.

**В. ЛЕОНИДОВ.**

**Ĕç рынокĕнче**

## Пуçаруллисене – пулăшу

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центртан пĕлтернĕ тăрăх декабрĕн 6-мĕшĕ тĕлне районти предприятисемпе организацисенче пурĕ 176 ваканси пур.

Çулталăк пуçланнăранпа ĕç тупас ыйтупа центра 1206 çын пулăшу ыйтса пынă. Вĕсенчен ытларахăшĕ – 14–18 çулхи çамрăксем тата хĕрарăмсем. Пурĕ вара 1087 çынна ĕçпе тивĕçтерме май тупнă.

Кăçал ĕççĕр виçĕ çынна, вĕсенчен пĕри инвалид, хăйсен ĕçне пуçарса яма 58800 тенкĕпе танлашакан субсидисем уйăрса панă. Тата тепĕр икĕ çын ĕç ушкăнĕ умĕнче хăйсен бизнес-проекчĕсене хӳтĕленĕ. Çапла вара çитес вăхăтрах вĕсене те хăйсен ĕçне пуçлама ĕçпе тивĕçтерекен центр 117,6 пин тенкĕ уйăрма пăхнă.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

# Тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ

***Камсем тивĕçессĕ ăна?***

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн 48-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн кирек камăн та квалификациллĕ юридици пулăшăвĕпе усă курма право пур. Саккунпа вара уйрăм тĕслĕхсенче çак пулăшупа тӳлевсĕрех тивĕçтерессине пăхса хунă.

Çак гарантие пурнăçа кĕртессипе «тахçантанпах кĕтнĕ» 324-ФЗ № «Раççей Федерацийĕнчи тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ çинчен» Федераллă саккуна 2011 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнче йышăнчĕç. Асăннă саккун 2012 çулхи январĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса вăя кĕчĕ.

**Саккун тӳлевсĕр майпа юридици пулăшăвĕ илме тивĕç граждансен конкретлă категорийĕсене палăртрĕ:**

1. Пĕчĕк тупăшлисем (çемье членĕ пуçне тивекен вăтам тупăш пурăнма кирлĕ минимумран сахалрах пулсан);
2. 1-мĕш тата 2-мĕш ушкăн инваличĕсем;
3. Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем, Раççей Федерацийĕн Геройĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, Социализмла Ĕç Геройĕсем;
4. Инвалид ачасем, тăлăх ачасем, ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасем тата вĕсен саккунлă представителĕсем, çавăн пекех кун пек ачасен прависемпе саккунлă интересĕсене хӳтĕлессине тивĕçтерессипе пулăшу ыйтакан ытти представительсем;
5. Социаллă пулăшăвăн стационар учрежденийĕсенче пурăнакан çулланнă çынсемпе инвалидсем;
6. Спецприемниксенчи тата ирĕкрен хăтарнă вырăнсенчи çул çитмен çамрăксем;
7. Психиатри лечебницисен пациенчĕсем;
8. Хăйсен ĕçĕсемшĕн явап тытма пултарайман çынсем тата вĕсен саккунлă представителĕсем, енчен те вĕсем асăннă граждансен прависемпе саккунлă интересĕсене хӳтĕлессине тивĕçтерессипе пулăшу ыйтаççĕ пулсан.

Кунсăр пуçне çӳлерех асăннă Федераллă саккун Раççей историйĕнче пĕрремĕш хут официаллă шайра тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассин икĕ сыпăклă системине çирĕплетрĕ: патшалăх пулăшăвĕ тата патшалăхăн шутланман пулăшу мелĕ. Халĕ вара Чăваш Енри тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ памалли патшалăх системи çинче тĕплĕнрех чарăнса тăрар.

Чăваш Республикин 2012 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче йышăннă 20 № «Чăваш Республикинчи тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ çинчен» Саккунĕпе тата унпа килĕшӳллĕн палăртнă нормативлă право акчĕсемпе республикăра патшалăхăн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тивĕçтерекенсен ушкăнне çирĕплетнĕ. Унта паянхи куна çаксене кĕртнĕ:

– Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçăн 20 органне;
– Чăваш Республикин 29 бюджет учрежденине (социаллă пулăшу центрĕсем, çамрăксен пуçарăвĕн центрĕсем);
– Чăваш Республикин 13 хысна учрежденине (çул çитмен ачасен, уйрăм вырăнта тĕпленсе пурăнман çынсен тата çавăн йышши ытти категорисене кĕрекенсен социаллă тата реабилитаци центрĕсем);
– Чăваш Республикин автономлă 1 учрежденине (ĕç сыхлавĕн республикăри центрĕ);
– 272 адвоката.

Граждансене тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тивĕçтерессипе Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕн уполномоченнăйĕ тесе республика Юстици министерствине палăртнă (428004, Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10-мĕш çурт, тел.: (8352) 62-33-53.

Патшалăх системи шутĕнче тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассин тĕсĕпе унăн виçи саккунра палăртнă уйрăм критерисенчен килет (тавлашуллă самант характерĕнчен тата пулăшу кам тивĕçтернинчен). Çавăнпа та тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илес текен çын патшалăхăн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тивĕçтерекенĕн полномочийĕсем пирки пĕтĕмĕшле те пулин пĕлни кирлĕ.

Акă, тĕслĕхрен, **Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсемпе вĕсене пăхăнса тăракан ведомство учрежденийĕсем** граждансене çакăн йышши юридици пулăшăвĕсемпе тӳлевсĕр тивĕçтереççĕ:

1. Раççей Федерацийĕн законодательствипе граждансен ыйтăвĕсене пăхса тухас енĕпе палăртнă йĕркепе хăйсен компетенцийĕ шайĕнче право енĕпе сăмахпа ăнлантарса тата çырса консультаци параççĕ.

2. Право ыйтăвĕсемпе документсем (заявленисем, çăхавсем, ыйтса çырнисем т. ыт. те) хатĕрлесе параççĕ тата граждансен интересĕсене судсенче, патшалăх тата муниципаллă органсенче, организацисенче хӳтĕлеççĕ. Кунта тӳрех асăрхаттарса хăвармалла, кун пек пулăшупа пурте мар, социаллă пулăшăва тата социаллă хӳтлĕхе тивĕçлисем кăна усă курма пултараççĕ, çитменнине унпа тăватă тĕслĕхре кăна тивĕçтереççĕ:

1) потребительсен прависене хӳтĕлессин ыйтăвĕсемпе (коммуналлă услугăсемпе тивĕçтерес тĕлĕшпе);
2) гражданина ĕçсĕррисен шутне кĕртессин тата ĕçсĕррисене паракан пособипе тивĕçтерессин ыйтăвĕсемпе;
3) социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерессин ыйтăвĕсемпе, пĕчĕк тупăшлă граждансене патшалăх социаллă пулăшăвĕ парассипе, пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн тӳлеме субсидисем парассипе;
4) инвалидсен мадицинăпа социаллă экспертизин тата реабилитацийĕн ыйтăвĕсемпе.

**Адвокатсен вара тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассинчи ĕçĕ-хĕлĕ анлăрах та калăпăшлăрах.**

Чăваш Республикин Адвокатсен канашĕн йышăнăвĕпе (7 №, 2012 çулхи июнĕн 15-мĕшĕ) Чăваш Республикинче 2012 çулта патшалăхăн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕн ĕçне-хĕлне хутшăнакан адвокатсен списокне çирĕплетнĕ. Ку списокра 272 адвокат. Вĕсене Чăваш Республикин районĕсемпе хулисем тăрăх пайласа тухнă, вĕсен списокне Интернет сетĕнче Чăваш Республикин Адвокатсен палатин сайтĕнче вырнаçтарнă.

Патшалăхăн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕн системинчи адвокатсен полномочийĕсен калăпăшне хакланă май кунта та çавнах палăртмалла: вĕсен пулăшăвĕ анлăрах та калăпăшлăрах тени пур ыйтупа та пулăшаççĕ тенине пĕлтермест. Вĕсен полномочийĕсен калăпăшне законодательство нормисемпе пăхса хунă.

**Çапла вара адвокатсем паракан тӳлевсĕр право пулăшăвĕ шутне çаксем кĕреççĕ:**

**1. *Право ыйтăвĕсемпе сăмах вĕççĕн тата çырса консультаци парасси, документсем хатĕрлесе парасси*** (анчах та пур ыйтусемпе те мар, саккунра палăртнă 15 тĕслĕхре). Вĕсем шутне çаксем кĕреççĕ:

1) куçман пурлăхпа çыхăннă тавлашуллă ыйтусене татса парасси (сăмах гражданинăн е унăн çемье членĕсен пурăнмалли пĕртен-пĕр çурт-йĕрĕ пирки пырать пулсан);
2) пурăнмалли çурт-йĕрпе çыхăннă тавлашуллă ыйтусене татса парасси (енчен те хваттер, пурăнмалли çурт-йĕр е унăн пĕр пайĕ гражданинăн е унăн çемье членĕсен пурăнмалли пĕртен-пĕр çурчĕ пулса тăрать пулсан);
3) çĕрпе çыхăннă тавлашуллă ыйтусене татса парасси (енчен те тавлашуллă çак çĕр участокĕ çинче гражданинăн е унăн çемье членĕсен пурăнмалли пĕртен-пĕр çурчĕ вырнаçнă пулсан);
4) потребительсен прависене хӳтĕлесси (коммуналлă услугăсемпе тивĕçтересси);
5) ĕçпе çыхăннă тавлашуллă ыйтусене татса парасси;
6) гражданина ĕçсĕррисен шутне кĕртессин тата ĕçсĕррисене паракан пособипе тивĕçтерессин ыйтăвне татса парасси;
7) çын ĕçре вилнипе, сусăрăннипе е ытти тĕлĕшпе сывлăхне сиен кӳнипе çыхăннă сăтăра саплаштарассин ыйтăвне татса парасси;
8) социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерессин, пĕчĕк тупăшлă граждансене патшалăх социаллă пулăшăвĕсене парассин, пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн тӳлеме субсидисем парассин ыйтăвĕсене татса парасси;
9) пенсипе çыхăннă тавлашуллă ыйтусене татса парасси;
10) çемьери тавлашуллă ыйтусене татса парасси (ачан ашшĕ е амăшĕ кам пулнине палăртасси, алимент тавлашуллă илесси);
11) политика репрессийĕсене пула шар курнă граждансене реабилитацилесси;
12) ĕçлеме пултараслăх шайне палăртасси;
13) психиатри пулăшăвĕ панă чухне граждансен прависемпе ирĕклĕхĕсене пăсни пирки çăхавлассипе çыхăннă ыйтусене татса парасси;
14) инвалидсен медицинăпа социаллă экспертизипе тата реабилитацийĕпе çыхăннă ыйтусене татса парасси;
15) патшалăх влаç органĕсен, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тата должноçри çынсен акчĕсене судсăрах çăхавлассипе çыхăннă ыйтусене татса парасси.

***2. Судсенче, патшалăх тата муниципаллă органсенче, организацисенче граждансен интересĕсене хӳтĕлесси.*** Кунта çирĕп йĕрке пур. Интерессене хӳтĕлесси юридици пулăшăвĕ ыйтаканăн процессуаллă статусĕнчен килет. Çак ыйтусемпе пулăшу пулма тивĕç:

1) куçман пурлăхпа, пурăнмалли çурт-йĕрпе тата çĕр участокĕпе çыхăннă тавлашуллă ыйтусене татса парасси (сăмах гражданинăн е унăн çемье членĕсен пурăнмалли пĕртен-пĕр çурт-йĕрĕ пирки пырать пулсан);
2) алимент шыраса илессипе, çын ĕçре вилнипе, сусăрăннипе е ытти тĕлĕшпе сывлăхне сиен кӳнипе çыхăннă сăтăра саплаштарассипе çыхăннă ыйтусене татса парасси;
3) гражданин ĕçлеме пултарайманнине палăртасси;
4) реабилитаципе çыхăннă ыйтусем;
5) çынна ирĕксĕрлесе психиатри стационарне вырнаçтарассипе е психиатри стационарĕнче ирĕксĕрлесе тытса усрамалли тапхăра тăсассипе çыхăннă ыйтусем.

Çапла вара патшалăх системинче тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тивĕçтересси (Чăваш Республикин бюджечĕ шучĕпе) çӳлте асăннă нормăсемпе килĕшӳллĕн пулса пымалла.

Патшалăхăн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕн участникĕсем, пулăшу йĕркипе условийĕсем пирки тулли информацие Раççей Федерацийĕн Юстици министерствин Чăваш Республикинчи управленийĕнче (тел.: (8352) 62-43-44, Интернетăн информацие телекоммуникаци сечĕн официаллă сайчĕ: http//to21.minjust.ru) е Чăваш Республикин Юстици министерствинче тата Чăваш Республикин Адвокатсен палатинче илме пулать.

**О. ГРИГОРЬЕВА,**
**РФ Юстици министерствин Чăваш Республикинчи управленийĕн пай пуçлăхĕн çумĕ.**

# Сире «Минутка» кафе йыхравлать

Умра пурте кĕтекен пысăк уяв – Çĕнĕ çул. Ăна епле кĕтсе илетĕн – çулталăка çапла иртеретĕн тенине тĕпе хурса кашниех илемлĕ те хăтлă залра палăхлă та тутлă çимĕçпе, савăк юрă-кĕвĕпе кĕтсе илме ĕмĕтленет. **Уяв вăхăчĕ вара – чылайчен асра юлмалли самант. Çавăнпа та ăна кашниех чи çӳллĕ шайра ирттерме тăрăшать. Уяв ирттермелли вырăн шыраса хăшкăлма кирлĕ мар. Кунта вара вăтăр çын вырнаçмалăх «Минутка» кафе пулăшма шантарать. Апла пулсан пĕр тăхтаса тăмасăр унта çул тытар. Чи пĕлтерĕшли вара – кунти хак, ыттисемпе танлаштарсан, чи пĕчĕкки.**

– Çакăнти хăтлăха йăлтах туянакан кăмăлне туллин тивĕçтерес тĕллевпе йĕркеленĕ. Пысăк тупăш пирки кăна ĕмĕтленни вырăнлах та мар пулĕ. Чи пĕлтерĕшли вара пирĕншĕн – пĕчĕкрех хаклă пахалăхлă апат-çимĕç сĕнесси. Эпир хамăр патра туянакан кăмăлне тивĕçтертĕмĕр пулсан, вăл малашне те кунтах килет, – терĕ кунти ĕç-хĕлпе паллаштарнă май Татьяна Михайловна.

Çавăн пекех кунта çуралнă кун тата ытти уяв ирттерме, пĕрпĕринпе калаçса ларма та питĕ меллĕ. Ачасен уявне те кунта йĕркелеме пулать. Сирĕн кăмăла кура кунти ĕçченсем апатçимĕçпе кăна мар, кирек епле

### Тĕпре çын ыйтăвĕ



юрă-кĕвĕпе, ытти хăтлăхпа тивĕçтереççĕ.

«Минутка» кафере Т. Романова тата Т. Чабышева ăста поварсем ĕçлеççĕ. Кафере йăлтах паянхи кун ыйтакан çĕнĕ йышши оборудовани вырнаçтарнă. Çакă пахалăх çине пысăк витĕм кӳрет.

– Паллах, кунти çимĕçе ют тăрăхран кӳрсе килнĕ çурма фабрикатсемпе танлаштараймăн. Хамăр тăрăхра ӳстернĕ ашпăш, пахча-çимĕç пур енĕпе те паха. Кафене тĕп продукципе куллен пĕчĕкшер партипе кунти фермер хуçалăхĕсем, уйрăм çынсем тивĕçтереççĕ, – калаçăва хутшăнчĕç Татьяна Олеговнăпа Татьяна Юрьевна поварсем.

Кунти пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле Т. Бардасова предпринимательница йĕркелесе пырать. Асăннă сферăра Татьяна Михайловна 1995 çултанпа тăрăшать. Пурнăç утти пе тан пыракан предпринимательница район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕн пĕчĕк тата вăтам предпринимательство аталанăвĕн Канашĕн членне суйланă. Район экономикин аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн, общественнă ĕçе активлă хутшăннăшăн ăна Тав çырăвĕсем, Хисеп грамотисем парса чыслана. Çавăн пекех Татьяна Михайловна чăннипех те пулăшу кирлĕ çынсене аякра хăвармасть. Тĕрлĕ мероприяти ирттернĕ чухне те унăн витĕмĕ курăмлă.

Унсăр пуçне Ситуккассинче «Колосок» тата Пиккиккассинче «Полянка» магазинсем халăх ыйтăвне тивĕçтереççĕ. Пур ĕçре те ĕлкĕрет хастар предприниматель. Палăртма кăмăллă, вăл çак сферăра тăрăшакансенчен ăнăçлисенчен пĕри.

Бардасовсен суту-илӳ ĕçĕнчи династийĕ тăхăр вунă çула яхăн. Георгий Бардасов суту-илӳ сферинче çирĕм тăватă çул тăрăшнă. Халĕ унăн йăхне тăсаканĕсем те çак енĕпех тимлеççĕ. Татьяна Михайловнăн мăшăрĕ те çак сферăра вăй хурать. Икĕ ачи те суту-илӳ енĕпех пĕлӳ илеççĕ.

– Эпĕ мĕн ачаранпах сутуçă пулма ĕмĕтленнĕ. Хам тĕллеве вăя кĕртрĕм тесе шухăшлатăп, – калаçăва вĕçлерĕ ăста предприниматель.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Вĕренӳ учрежденийĕнче

# Москакасси шкулĕнчи тĕрĕслев

Ноябрĕн 28-мĕшĕнче Москакасси шкулĕнче планпа пăхнă тĕрĕслев иртрĕ. Çавна май ĕç ушкăнĕ санитари нормипе килĕшсе тăман хăш-пĕр саманта палăртрĕ. Ачасен кану тата вăйă вырăнĕн лаптăкне кирлĕ пек йĕркелемен. Спорт залне çӳрекен арçын ачасем валли хăвăнса тăхăнмалли уйрăм пӳлĕм çук. Çавăнпа вĕсем кулен пурте кĕрсе тухакан вырăнпа усă кураççĕ. Шкулăн пĕрремĕш хутĕнче арçын ачасен туалечĕ ĕçлемест. Хими пӳлĕмĕн лабораторийĕнче косметика юсавĕ ирттермен, стенасем яка мар, вырăнăн-вырăнăн çуркаланса пĕтнĕ. Çавна май кунта дезинфекци шĕвекĕсемпе пӳлĕме тасатма май çук. Биологи пӳлĕмĕнчи урайне сарнă линолеум япăхнă. Апатлану пӳлĕмĕнчи вентиляци системи юсавсăр. Çаксемшĕн асăннă шкул ертӳçи ответлă. Çавăнпа та ăна асăрхаттарнă, çитес вăхăтра çитменлĕхсене пĕтерме хушнă.

**Г. ВОРОБЬЕВА,**
**«Роспотребнадзор» управленийĕн тĕп специалист эксперчĕ.**

# Çĕр-шыв сыхлавĕнче тăнипе телейлĕ

Çакăн пек пĕтĕмлетӳ патне илсе çитерчĕç хамăрăн калаçăва Муркаш ентешĕсем. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан **(сулахайран сылтăмалла)** Владимир Вячеславович Лукинпа Виталий Владимирович Пагеев – Раççей Федерацийĕн Сывлăш-çар вăйĕнче службăра тăнă тата паян та çар ĕçĕнчен катара мар вертолетчиксем.

Çар ĕçченĕсемпе тата ветеранĕсемпе эпĕ Ильинкăри вăтам шкул 150 çул тултарнине халалласа ирттернĕ савăнăçлă каçра тĕл пултăм. Владимир Вячеславовичпа Виталий Владимирович – тантăшсем. Вĕсем Ильинкăри вăтам шкула 1973 çулта ăнăçлă вĕренсе пĕтернĕ. Шкул çулĕсенче Виталий «А» класра, Володя «Б» класра пĕлӳ пухнă. Нискасси ял тăрăхĕнчи Елшикра çуралнă хыççăн Ильинка ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинче ӳснĕ Володя та, Ильинка ял тăрăхĕнчи Хунтăкассинче çуралса çитĕннĕ Виталий те шкултах çирĕп те дисциплинăллă ачасем пулнипе палăрнă. Кунпа пĕрлех вĕсем лайăх вĕреннипе те вĕрентекенсен асĕнче юлнă.

Тăрăшуллă каччӑсем вăтам шкул хыççăн (1973 çулхине) пĕрле пулса Саратоври çар летчикĕсем хатĕрлекен авиаци училищине вĕренме кĕнĕ. Юлташсем кунта та хăйсене ырă енчен çеç кăтартнă. Çапла вара училище хыççăн та вĕсем Мускав çар округĕнче пĕрле службăра тăнă. Кăшт вăхăтран çамрăк офицерсене çар службин çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсене уйăрса ярать. 28 çул (2004 çулччен) вертолетчик-тантăшсем пĕрпĕрне кураймасçĕ. Çак хушăра Владимир Вячеславович Чехословакире, Инçет Хĕвел тухăçĕнче, Афганистан Республикинче, Польшăра, Çурçĕр Кавказри çар округĕнче службăра тăрать. Приказсене яваплăха туйса пурнăçланăран пирĕн ентеш орденсемпе медальсене сахал мар тивĕçет. Летчик стажне 34 çула çитерсе 1993 çулта Владимир Вячеславович тивĕçлĕ канăва тухать.

– Тăван çĕр-шыва юрăхлă пулнишĕн паян эпĕ савăнатăп. Çак ĕçре хамăра вĕрентнĕ учительсен тӳпи те пысăк пулни иккĕлентермест. Çавăнпа шкулăн юбилей каçне килмесĕр те чăтаймарăм. Килмен пулсан тĕрĕс мар пулатчĕ, – терĕ çар çынни пек кĕскен те уççăн капитан юлташ.

Унăн тантăшне Виталий Владимировича та çĕр-шыва хӳтĕлес сулсем Тăван çĕр-шывăн тата тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕсене илсе çитерет. Икĕ хутчен Афганистан Республикинче, икĕ хутчен Чечен Республикинчи хирĕç тăрура пулсан та, Сирире, Иранта, Германири Демократиллĕ Республикăра службăра тăнă çулсенче те çĕр-шыв интересĕсене чыслăн хӳтĕлет вăл. Командирсен пĕр приказне те вăхăтра пурнăçламанни пулманнине нумай орден медальсем çирĕплетеççĕ. Çаксене шута илсех пысăк опытлă çар вертолетчикне Никарагуана аслă çар советникĕ пулса ĕçлеме ярасçĕ.

## Ыран – Тăван çĕр-шыв паттăрĕсен кунĕ



Çĕр-шыв сыхлавĕнчи хăйĕн пурнăçĕпе паллаштарнă май вертолетчик пăлханчĕ, куççульне те пĕрре мар шăла-шăла илчĕ. Афганистан Республикинче службăра тăма тивнĕ май пирĕн ентеш 818 хутчен çар вĕçевне тухнă. Командирсен приказне пурнăçласа çав вĕçевсенче вăл пирĕн миçе салтакăнне пурнăçне сыхласа хăварнине кам шутланă-ши? Хамăр салтаксене Чечен Республикинче хӳтĕлесе 519 хутчен сывлăша çĕкленни те кашнинчех шурă çӳç хушнă. «Çаксене тата тăван килтен инçетри ытти çар операцийĕсене хутшăннине аса илетĕп те паян куççуль тухать», – терĕ тĕрлĕ çулсенче штурман-летчик, вертолет командирĕ, аслă летчик, звено командирĕ, эскадрилья командирĕн заместителĕ, эскадрилья командирĕ, вĕçев тата çар хатĕрленĕвĕн аслă çар советникĕ пулнă ентеш.

Тăван çĕр-шыври тата тĕнчери тĕрлĕ кĕтессенче пулсан та, темиçе хутчен вилĕме куçран пăхсан та Виталий Владимирович тăван яла, хăйне пурнăç çулĕ çине кăларнă ашшĕ-амăшĕпе Ильинка шкулне, кунта вĕрентекенсене манман. Çавăнпа вуламаçырма вĕрентнĕ тăван шкул 150 çул тултарнинчен те катара юлаймарĕ вăл. Уяври хăйĕн сăмахĕнче те виçĕ орденпа 18 медале тивĕçнĕ Виталий Владимирович шкулта вĕренекенсене лайăххах вĕренме, спортпа туслă пулма, ашшĕ-амăшне вĕрентекенсене ялан пулăшма чĕнсе каларĕ. Унăн кашни сăмахĕ чĕтренсе тухни уява килнĕ вертолетчик пурнăçра хурри-шуррине самай курнине ĕнентерчĕ.

– Тăван çĕр-шыв пире шанни, чи кăткăс вырăнсене çар операцийĕсене яни эпир шкулта чухне те, çар училищинче те, хыççăнхи служба вырăнĕсенче те вăхăта усăсăр ирттерменни пирки калать. Çар служибинчен кайнă хыççăн паян эпĕ Чрезвычайлă ларутăру министерствин Тверь хулинчи пĕр чаçĕнче К-32 вертолетăн командирĕнче службăра тăни эпир хамăр вăйсене çухатманнине, çĕр-шыв пире çав-çавах шаннине çирĕплетет, – терĕ подполковник юлташ шкула килекен кашни çынра хăй паллаканнине шыраса.

Тăван çĕр-шыв паттăрĕсен кунĕ ячĕпе хамăрăн черетлĕ мухтавлă ентешсем пирки халăхăмăра каласа пани эпир вĕсемпе мăнаçланни çинчен пĕлтерни пултăр. Çĕр-шыв хӳтĕлевĕнче, унăн экономика аталанăвĕнче палăрнă кашни ентеш валлиех район хаçачĕн страницисенче малашне те вырăн пулĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Вăл «Киров» крейсерпа «Марат» линкор çинче пулнă



Тăван çĕр-шыва хӳтĕлесе тĕрлĕ вăрçăра пин-пин салтак пурнăçĕ пĕр шелсĕр те вăхăтсăр татăлнă. Чылайăшĕ пурнăçăн анлă сукмакĕпе утма кăна пуçланă, апла пулин те хăйсен кунçулĕ пирки манса çĕр-шыв тивлечĕшĕн, ыттисен малашлăхĕшĕн вăрçă хирне кĕнĕ. Пурнăçшăн, çутă малашлăхшăн кунçулĕсене панисем умĕнче пуççене ячĕшĕн кăна таяс марччĕ пирĕн. Палăк умĕнче, асăну кунĕнче каланă сăмахсене ĕçпе çирĕплетни вара вĕсен паттăр ĕçĕсене яланах асра тытни пулĕччĕ.

Ыран Тăван çĕр-шыв паттăрĕсен кунĕ пулнă май «Киров» крейсер тата «Марат» линкор çинче пулнă, тинĕс флотĕнче çар тивĕçĕсене пурнăçланă чухне паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă, Нискассинче çуралса ӳснĕ Варсонофий Никитин кунçулĕнчи самантсене сăнласшăн. Тăван çĕр-шыва тăшманран хăтарассишĕн хăй пурнăçне, сывлăхне шеллемесĕр çапăçнă салтак Новороссийск тата ытти чылай ялпа хулана хӳтĕлесе çапăçусене хутшăннă. Вăрçă хирĕнче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Варсонофий Никитича «Хĕрлĕ Çăлтăр» орден, «Кавказа хӳтĕленĕшĕн», «Германие çĕнтернĕшĕн» медальсем парса чысланă. Вăл пурнăçран уйрăлнăранпа вара çак кунсенче вăтăр çул пулать.

...Шкулта чухнех пĕчĕк Варсонофий вăр-варлăхĕпе, ăс-тăн çивĕчлĕхĕпе ыттисенчен уйрăларах тăнă, шут ĕçне вара ытларах та кăмăлланă. Учитель панă хăнăхтарăва ачасем пурнăçлама ĕлкĕриччен алă çĕклесе маларах хуравланă. Пĕтĕмĕшле илсен – пур енĕпе те пуçаруллă тата анлă тавра курăмлă яш.

Çапла вара çирĕм çул урлă каçнă активлă комсомолеца счетовод ĕçне шанаççĕ, тепĕр икĕ çултан пултарулăхне кура ял совечĕн председателĕ пулма çирĕплетеççĕ. Вăл ертӳçĕ тивĕçне кăна мар, ытти ĕçе те пурнăçланă, манăн е санăн тесе уйăрса тăман. 1935 çулхи февраль уйăхĕнче çар ретне тăма хатĕр каччăна салтака илсе каяççĕ.

– Эпĕ арçын, апла пулсан Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме тивĕç, ку ĕçрен аякра юлмăн, маншăн ан кулянăр, – пулнă унăн тăван килтен тухса кайнă чухнехи сык пуллашу сăмахĕ.

Çапла вара Варсонофий ют тăрăхра хĕсметре пилĕк çул ирттерет. Декабрь уйăхĕнче тăван яла таврăнать те строительсен бригадин ертӳçине вăй хума пуçлать. Йăлтах йĕркеллĕ, мĕн ĕмĕтленни пурнăçланать, ĕçре ăна хисеплеççĕ, унăн шухăш-кăмăлне тĕпе хураççĕ.

1941-мĕш çул. Вăрçă пуçлансан вара пĕтĕм ĕç-хĕл тĕпрен улшăнать. Паллах, çар ретĕнче пулнă салтак Тăван çĕр-шыва хӳтĕлессинчен аякра тăма пултарайман. Çавăнпа та пĕрремĕш чĕнӳпе вăл çĕр-шыва хӳтĕлеме тухса каять.

– Сывă юл тăван ял-йыш, пирĕн çинчен ан манăр. Эпир çĕнтерӳпе таврăнăпăр, эсир хытă кĕтĕр, – тенĕ вăл шурă тутăрпа сулланă май.

Маларах çар ĕçĕнче пысăк ăсталăх пухнă Варсонофий Никитича Хура тинĕç флотĕн дивизийĕнче командир çумĕ пулма шанаççĕ. Вăл пуçарнипе салтаксен ушкăнĕ тăтăш хĕрӳ çапăçусене хутшăнать, çитĕнӳсем тăвать.

1942 çулхи июль вĕçĕ. Кавказа хӳтĕлес тапхăр пуçланать, уйрăмах Новороссийск хули патĕнчи çапăçу питĕ хĕрӳ иртет. Кунта Хура тинĕç тата Азов çар флотилийĕн партизанĕсемпе подпольщикĕсем хăюлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ. Тăшман уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăнсене çавăрса илессишĕн хытă кĕрешет.

Пĕр çапăçу вара çапларах иртет. Батарея командирĕн çумĕ Варсонофий Никитич ертсе пыракан крейсера Новороссийск хули патнелле сывхарнă чухне тӳперен тăшман самолечĕсем асăрхаççĕ. Ăна тĕп тăвас тесе çӳлтен вĕççĕр-хĕрсĕр вут-çулăм тăкаççĕ. Ăнсăртран сиенленнĕ карап путма пуçлать, чылай салтак суранланать, вилекенсем те йышлăн пулнă.

– Пирĕн аттене вара пĕри путсран çăлăнмалли çаврăм ывăтса парать. Анчах та тепĕр самантран тăшман пульли леккнипе вăл тăварлă тинĕсе ӳкет. Икĕ талăк унта выртнипе аллиурине вара йăлтах тăварлă шыв çисе шăтарать. Баку хулинчи госпитальте кăна тăна кĕрет атте. Йывăр сурансене пĕр çулталăк сиплеме тивет, – аса илет ашшĕн калаçăвне аслă хĕрĕ Раиса Варсонофьевна.

Вăрçăн хĕрӳ тапхăрĕ малалла пырать. Госпитальте сывалнă хыççăн Варсонофий Никитич хăйне каллех фронта яма ыйтать. Çапла вара чăваш салтакне Хура тинĕç флотĕнчи пĕр уйрăмăн стрелковăй взвочĕн командирĕ пулма çирĕплетеççĕ.

1943 çулхи сентябрь уйăхĕн 16-мĕшĕ. Салтаксен пĕр тĕллев – Новороссийск хулине тăшманран тĕпрен тасатмалла. Çапла вара пĕрлехи паттăрлăхпа тинех хулана нимĕç салтакĕсенчен хăтараççĕ, ун варринче вырнаçнă цемент туса кăларакан завод çывăхĕнче вĕсене тĕппипе аркатаççĕ. Нимĕç салтакĕсем хăйсем палăртнă пек Новороссийскри тинĕс порчĕпе усă кураймаççĕ. Унтан тăшманăн пĕр карапĕ те иртеймест. 30 тăваткал километрти çапăçу 225 куна тăсăлнă. Кăшт каярах çавăн пекех Одесса, Севастополь, Керчь тата ытти хуласене ирĕке кăлараççĕ.

...Вăрçă вĕçленнĕ пулин те Варсонофий Никитич тӳрех тăван тăрăха таврăнмасть. Ăна çамрăк моряксемпе командирсене çар ĕçне вĕрентсе хатĕрлеме çирĕплетеççĕ. Çапла вара вăл 1947 çулхи август уйăхĕччен хăй пурнăçне çак ĕçпе çыхăнтарать, ун чухне вăл Дунай флотилийĕнчи пĕр уйрăмăн командирĕ пулнă.

Тинех тăван ял, кунта та вăл питĕ кĕтнĕ çын. Çар ĕçĕнчен уйрăлса килсенех ăна колхоз ертӳçи пулма шанаççĕ.

– Çав çулсенче Нискасси ялĕнче чылай çĕнĕ объект хута кайрĕ. Сакăр çул вĕренмелли шкул, ĕне, сысна, чăх-чĕп фермисем çĕкленчĕç. Çĕнĕ çуртсем пĕрин хыççăн тепри çĕкленнинче аттен тӳпи те пысăк тесе шутлатăп. Вăл нимĕнле ĕçрен те хăрамастчĕ тата хăйне ыттисемпе танах тытатчĕ, вĕсемпе пĕрле пĕрене йăтатчĕ, пăта çапатчĕ, – аса илĕве малалла тăсать Раиса Варсонофьевна.

Унăн ăсталăхĕпе пултарулăхне часах çӳллĕ шайри ĕçченсем те асăрхаççĕ. Кăшт каярах ăна Шупашкар хулинчи ертӳçĕсен кадрĕсене хатĕрлекен шкула ĕçлеме чĕнеççĕ, кунта вăл ăста специалистсем вĕрентсе кăларать.

Çапла вара майĕпен ялти пурнăç йĕркеленме пуçлать. Ăста ертӳçĕ тăрăшнипе уйрăм çынсен çурчĕсене ниме шучĕпе хăпартаççĕ. Варсонофий Никитич кирек хăçан та ахаль çынсемпе пĕрле канашланă, вĕсен сĕнĕвĕсене шута илнĕ. Çавăнпа та ăна пурте хисепленĕ. Ял пурнăçĕшĕн вăл ырми-канми тăрăшнă. Унăн çывăх юлташĕ тата канашçи «Знамя труда» колхоз ертӳçи Е. Андреев пулнă.

1948 çулта Нискассинче Никитинсен çемйи чăмăртанать. Çамрăксем ĕмĕр вĕçне тухиччен пĕрле килĕштерсе пурăнма тĕв тăваççĕ, тăватă хĕрпе пĕр ывăл пурнăç çулĕ çине тăратаççĕ. Вĕсем хушшинче вĕрентекен, сутуçă, флорист тата ытти ĕççсемпе ырă ята тивĕçнисем пур. Варсонофий Никитич мăшăрĕ Нина Максимовна малтан фермăра, кайран чылай хушă бригадирта тăрăшать. Çĕвĕ ĕçĕ те унăн питĕ çыпăçуллă пулнă. Çавăнпа та ачисене яланах илемлĕ çи-пуçпа çӳретнĕ. Унсăр пуçне тата маттур хĕрарăм юрăкĕвĕ ăсти пулнă, апла хут купăс тытса ыттисене те савăнтарнă.

– Эпир аттене яланах вĕрентекен пек курнă. Кирек епле ĕç пурнăçланă чухне те вăл пирĕнтен яланах йĕркелĕхпе çирĕплĕх ыйтнă. Çавăн пекех вăл питĕ тирпейлĕ çынччĕ. Пире вара хăй уйрăмах юратнă çимĕçне пĕçерсе çитеретчĕ. Атте пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа вăтăр çул çитрĕ ĕнтĕ. Эпир ăна нихăçан та асран кăларас çук, – калаçăвне вĕçлерĕ Раиса Варсонофьевна.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ведомствăсем хушшинчи электронлă хутшăну

# Услугăсен шучĕ ÿсет

Чăваш Ен Информполитика министерстви патшалăх тата муниципаллă услугăсемпе тивĕçтернĕ çĕрте кирлĕ универсаллă 16 процесс ĕç-хĕлне тĕрĕслесе çирĕплетет. Палăртса хăвармалла, пирĕн республикăра ĕç тăвакан пур влаç органĕсемпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене те ведомствăсем хушшинчи электронлă хутшăну системин регион сегменчĕпе çыхăнтарнă. Халĕ республикăра унпа усă курса социаллă пĕлтерĕшлĕ 14 услугăпа (патшалăх услугисем 7 тата муниципаллă услугăсем 7) тивĕçтерме тытăннă ĕнтĕ. Çулталăк вĕçлениччен çак системăна татах 82 услуга хушăнмалла.

Хальхи вăхăтра ведомствăсем хушшинчи электронлă хутшăну системипе патшалăхăн çак услугисемпе тивĕçтерĕççĕ.

**ЧР Строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерстви:**

– икĕ е ытларах муниципаллă йĕркелÿсен (муниципаллă районсен, хула округĕсен) территорийĕнче вырнаçнă капиталлă строительство объекчĕсене тума, çавăн пекех реконструкци тума ирĕк парасси;

– икĕ е ытларах муниципаллă йĕркелÿсен (муниципаллă районсен, хула округĕсен) территорийĕнче вырнаçнă объектсене туса е реконструкцилесе пĕтернĕ хыççăн хута яма ирĕк парасси.

**ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерстви:**

– ачашăн уйăхсерен паракан пособие пама тытăнасси тата тÿлесси;

– пурăнмалли çуртйĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн субсидисемпе тивĕçтересси;

– пурнăçра йывăр лару-тăрăва лекнĕ граждансене пурлăх тĕлĕшĕнчен пĕр хут парса пулăшмалли услугăпа тивĕçтересси.

**ЧР Чĕр чунсен тĕнчин объекчĕсене тата вĕсем пурăнакан тавралăха сыхлас, тĕрĕслесе тăрас тата йĕркелес енĕпе ĕçлекен патшалăх службиĕ:**

– федераллă пĕрлехи йышши сунарçă билечĕсене парасси.

**ЧР Транспорт тата çулйĕр хуçалăх министерстви:**

– таксин çăмăл автомашинисене пассажирсем тата багаж турттарса çÿреме ирĕк парасси.

**Шупашкар хула администрацийĕ:**

– строительствăпа çыхăнман тĕллевпе çĕр участокĕсем уйăрса парасси;

– хваттерсене (пурăнмалли çурт-йĕре) çĕнĕлле планлама е йĕркелеме ирĕк парасси;

– граждансене пурăнмалли çурт-йĕр кирлисен тата пурăнмалли çурт-йĕр тума (туянма) патшалăх пулăшăвне тивĕçлисен учетне тăратасси;

– реклама конструкцийĕсем вырнаçтарма ирĕк парасси.

**Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕ:**

– çĕр участокĕсен хула строительствин планĕсене хатĕрлесси тата парасси.

**Улатăр район администрацийĕ:**

– пурăнмалли шутланакан пÿлĕме пурăнмалла маррисен тата пурăнмалли мар шутланакан пÿлĕме пурăнмаллисен шутне куçарасси.

**Шăмăршă район администрацийĕ:**

– ача усрава илес текен кандидатсене учета тăратасси.

Сывлăх

# Ан чирлĕр!

Чăваш Республикинчи «Роспотребнадзор» управленийĕн территори уйрăмĕнчен пĕлтернĕ тăрăх районта хальлĕхе грипп чирне регистрацилени пулман-ха. Районта пурăнакансенчен 23 процентне гриппран прививка тунă. Анчах та респираторлă вируслă инфекци чирĕпе чирлекенсен хисепĕ ÿссе пыни курăнать. Акă ноябрĕн 12–17-мĕшĕсенче пурĕ 39 тĕслĕх регистрациленĕ, 19–24-мĕшĕсенче – 52 тĕслĕх, ноябрĕн 26–30-мĕшĕсенче вара – 65.

Респираторлă вируслă инфекци чирĕпе чирлессинчен ытти чирсем пекех асăрханмалла. Апла ăшăрах тăхăнни кăна мар, организм иммунитечĕ вăйлă пулни те чирлессинчен хăтарма пултарать. Çавăнпа та "аскорбинка" тата ытти поливитаминсене йышăнни пулăшать. С витамин вара йÿçĕтнĕ купăста сĕткенĕнче, лимонра, кивире, мандаринра, апельсинпа грейпфрутра нумай пулнине ан манăр.

Гриппран, ытти вируслă инфекци ерессинчен сыхланма вара халăх медицини акă мĕн сĕнет.

Шăннине сиссенех 100 г пыла (çăка пылĕ пулсан аванрах) 1 лимон сĕткенĕпе хутăштарăр, çакăнта 800 г вĕретнĕ шыв хушăр. Çак шĕвеке пĕр кун хушшинче ĕçсе ямалла.

Фарфор чейнике 3 апат кашăкĕ чухлĕ çăка чечекĕ ямалла, 1 стакан вĕрекен шыв хушса 8–10 минут тытмалла. Пĕр е çур стакан чей ăшне кăмăла кайнă чухлĕ пыл хушса кунне 3–4 хут ĕçмелле. Çакăн пекех хăмла çырлин çулçисемпе те усă курма юрать.

Тата тепĕр меслет: 1 стакан ăшă сĕт ăшне 1 апат кашăкĕ чухлĕ пыл ярса пăтратмалла. Сĕте вскамасăр ĕçсе ямалла (кунне 2–3 стакан).

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

Йĕркесĕрлĕх

# Чипер пурăнма паман

Преступленисене тишкернĕ чух вĕсене пулса пыма мĕнле условисем пулăшнине дознавательсем уçăмлатаççĕ. Акă Ярапайкасси ял тăрăхĕнче пулса иртнĕ пĕр преступление тишкернĕ май кунта профилактика ĕçĕ самаях уксахлани палăрчĕ.

Ял тăрăхĕнче тăтăшах эрех-сăра ĕçекенсемпе тата ниçта та ĕçлеменнисемпе асăрхаттару мероприятийĕсем йĕркеллĕ ирттермеççĕ-мĕн. Административлă йĕркене пăсассинчен е преступлени тăвассинчен асăрхаттарса кун пеккисене ял тăрăхĕн профилактика канашне чĕнсе сÿтсе явмалла, общественноçăн та сĕрĕккĕн пăхмалла мар вĕсем çине.

Никам енчен те нимĕнле асăрхаттару çуккине кура-ши, Юрий вара хăйне ытла ирĕклĕ туйнă: мăшăрĕпе уйрăлнă пулин те ăна чипер пурăнма паман. Хĕрарăм каланине итлемесĕр ăна тăтăшах килсе хăратса, хĕнесе хăварнă. Акă çапла июнь уйăхĕнче ÿсĕр Юрий малтанхи арăмĕ патне киле пынă. Арçынпа хĕрарăм хушшинче часах хирĕçу тухнă. Хăй вăйлăрах пулнине кăтартасшăн пулса çак арçын малтанхи арăмне икĕ хут пуçран çапать.

Çакăн евĕр тĕслĕх каярах тепре пулса иртет – сентябрь уйăхĕнче. Каçалапа каллех эрех ĕçнĕ хыççăн Юрий малтанхи арăмĕн килне пырать. Ку хутĕнче те çав лару-тăрăвах сиксе тухать. Анчах та арçын хĕрарăма питĕ хытă çапса-тапса пĕтерет: хыçсăр пуканпа та, мотыга аврипе те. «Вĕлеретĕп!» – тесе хăратать.

Тепĕр пĕр-икĕ эрнерен тата çавăн пек ĕç-пуç пулса иртет арканнă çемьере. Каллех хирĕçÿ, çапăçу...

Çак виçĕ тĕслĕхе тишкерсе Раççей Федерацийĕн Уголовлă кодексĕпе килĕшÿллĕн уголовлă ĕç пуçартăмăр. Айăплава суд татса парĕ.

**Л. ЯДЫКОВА,**
**дознаватель.**

Вулаканăн шухăшĕ

# Чи çирĕп айăплава пăрахăçламалла пулман

Çак кунсенче «Хыпар» хаçатра (раштавăн 4-мĕшĕнчи номерĕнче) «Кашкăра тем чуль тăрантарсан та...» статья пичетленсе тухрĕ. Шухăша ячĕ вăл.

Мĕнле пурнăç пулса кайрĕ-ха: пур çĕрте те вĕлереççĕ, хĕнеççĕ, çаратаççĕ. Нимрен те, никамран та хăракан, шикленекен çук. Мĕншĕн? Хуравĕ паллă ĕнтĕ. Çын вĕлерекенсем хăйсен ĕçĕсемшĕн çирĕп наказани пулмасса курса тăраççĕ-çке: вун пилĕк çул каялла чи çирĕп айăплава – персе пăрахассине пăрахăçланă.

Унччен кун пек тискер преступленисем ытларах пысăк хуласенче кăна пулнă пулсан, халĕ çынлăх пирки манса çакăн пек преступленисене туни яла та çитрĕ. Упăшки арăмне е арăмĕ упăшкине хĕнесе, çĕçĕпе чиксе вĕлернĕ тĕслĕхсем унта та кунта илтĕнме пуçларĕç.

«23 çул каялла, 1989 çулта, эпир урăх патшалăхра пурăннă тапхăрта, Совет Союзĕнче 21467 преступлени пулнă, вĕсенче 276 преступника вĕлермелле тесе йышăннă», – тесе çырать Ю. Степанов автор. Чăнах та, шутласа пăхсан пысăк цифрăсем.

Халĕ, 21 ĕмĕрте, преступленисен йышĕ татах та пысăкланчĕ. Мĕншĕн тесен 1996 çулта айăпласа вĕлерессине пăрахăçланă. Ман шутпа вара çак саккуна пăрахăçламалла пулман. Çынна вĕлернĕшĕн айăплас та çавăн йышшиех пулмалла. Кашкăра темĕн чуль тăрантарсан та вăл вăрманах пăхать, тенĕ ваттисем. Ахаль каламан. Тен айăпласа вĕлерессине пăрахăçламан пулнă пулсан хăрушă преступленисем те сахалрах пулĕччĕç. Хаçат вулакансем мĕнле шутлаççĕ-ши?

**С. СЕМЕНОВА.**

Отаркка ялĕ.

Спорт

# Çитĕнÿсем пурне те хавхалантараççĕ

«Çамрăкла вĕренни – чул çинче, ватăлсан вĕренни – юр çинче» тенĕ пекех спортпа та çамрăкла туслашни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çакна ăнлансах районти хастар яшсем ачасемпе çамрăксен шкулĕнчи бокс секцине пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ. Спортра ăнăçусем тăвасси тренировкăсенчен нумай килет. Бокс секцийĕнче кашни тренировка пысăк пахалăхлă иртнине вара черетлĕ çĕнтерÿсем те çирĕплетсе параççĕ.

Ноябрĕн 19–22-мĕшĕсенче Çĕмĕрле хулинче боксерсен республика ăмăртăвĕ иртнĕ. Ултă спортсменран тăракан пирĕн район команди унта ăнăçлă ăмăртнă. Кĕрешÿсенче пурте призерсен йышне кĕме пултарнă. Вĕсем: Иван Налимов (Муркаш), Алексей Кудряшов, Алексей Алексеев, Кирилл Пугачев, Александр Шандимиров (тăваттăшĕ те Юнкăри вăтам шкултан), Станислав Кожевников (Калайкасси). Раççейри тĕрлĕ регионтан 130 ытла спортсмен хутшăннă ăмăртура К. Пугачевпа А. Шандимиров 3-мĕш вырăнсем çĕнсе илнĕ, ыттисем 2-мĕш вырăнсем йышăнма пултарнă.

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче Муркаш районĕн хастар боксерĕсем Çĕрпÿ хулине черетлĕ ăмăртăва тухса кайнă. «Виçĕ куна тăсăлнă Пĕтĕм Раççей турнирĕ афганец-салтаксен пĕрлешĕвĕн парнисене çĕнсе илессишĕн пулчĕ, – пĕлтерчĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн аслă тренерĕ Сергей Черкашин. – Хама та Афган тени питĕ çывăх пулнăран ку ăмăртăва каймасăр тăмарăмăр. 100 ытла боксер кĕрешрĕ унта», – ăмăртури лару-тăрупа кĕскен паллаштарчĕ вăл.

Ку ăмăрту та Муркашсемшĕн ÿсĕмлĕ иртнĕ. Николай Пегасов (Муркаш), Денис Грачев (Калайкасси), Алексей Корчагин (халĕ Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренет) ăмăрту çĕнтерÿçисем пулса тăнă, Станислав Кожевников (Калайкасси) 2-мĕш вырăн йышăннă.

Муркаш боксерĕсен тĕрлĕ шайри ăмăртусенче çĕнтерÿсем чылай. Кĕçĕннисем аслисен çитĕнĕвĕсемпе хавхаланса, вĕсенчен тĕслĕх илсе пыни вара чăннипех те пĕлтерĕшлĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Ачасем сывлăхлă ÿсчĕр

***Массаж организмшăн усăллă пулнине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Урасене массаж тунин пĕлтерĕшĕ те пысăк. Мĕншĕн тесен ура тупанĕ çинче активлă точкăсем нумай вырнаçнă. Çавăнпа та урасене массаж туни ачан урисем мĕнле аталанни çине кăна мар, нерв тытăмĕ çине те, ÿт-пÿ çине пĕтĕмĕшле те лайăх витĕм кÿрет. Апла пулсан – ача сывлăхлă ÿсни çине те.***

***Çакна шута илсе «Солнышко» ача садĕнчи пĕрремĕш кĕçĕн «Б» ушкăнра ачасен урисене тăтăшах массаж пултăр тесе ятарлă пĕчĕк кавирсем ĕçе кĕртрĕмĕр. Вĕсене хатĕрлессинче ашшĕ-амăшĕсем пире ăнланса пулăшу кÿчĕç. Кăнтăрла çывăрса тăнă хыççăн ачасен çак кавирсем тăрăх çăра уран хаваспах утаççĕ. Çапла туни ачасен сывлăхне çирĕплетме пулăшасса, апла вĕсем чир-чĕре çăмăллăнрах чăтса ирттерме пултарасса шанса тăратпăр.***

**Т. СМИРНОВА,**
**воспитатель.**



Çырусене тишкеретпĕр

# Аннерен, çемьерен хакли нимĕн те çук

Муркашри **«Солнышко» ача сачĕн воспитателĕсем Г. Сазонова тата С. Дашкова** «Манăн çемье» ятпа презентацисен конкурсĕ иртнĕ пирки çырса пĕлтерчĕç. Иккĕмĕш кĕçĕн «Б» ушкăна çÿрекен ачасен çемйисем хутшăннă унта. Конкурса ачасемпе ашшĕ-амăшĕсен хушшинчи çыхăнăва татах та çирĕплетес, çемьен пĕлтерĕшне ачасене уçса парас тĕллевпе йĕркеленĕ. Конкурс çĕнтерÿçисем Ефимовсен тата Налимовсен çемйисем пулнă.

**Тренккăри информаципе культура центрĕн ертÿçинчен Н. Сергеевăран** кунта Амăшĕн кунне ирттерни пирки хыпар çитрĕ. Чăнах та пысăк уяв пулнă – 50 çын ытла пуханнă. Г. Баранова ертсе пыракан «Дубравушка» ташă коллективĕ тата Ильинкăри вăтам шкулта вĕренекенсем амăшĕсене илемлĕ концертпа савăнтарнă. «Аннене савăнмалăх» ятпа литература куравĕ те ĕçленĕ. Уяв «Юман» кафери апатлануpa вĕçленнĕ.

Тепĕр çыру авторĕсем – **«Солнышко» ача-пăча сачĕн С. Иванова тата О. Петрова воспитательсем.** Вĕсем те аннесене халалланă уяв хаваслă та савăнăçлă иртни пирки пĕлтерчĕç. «Аннесен аллисем ылтăн» ятпа иртнĕ конкурса кĕçĕн çулхи ачасен амăшĕсем активлă хутшăннă. Кашни амăшех пĕр-пĕр номинацире çĕнтернĕ.

Культура

# Орининсем – лауреатсем



Халăх йăли-йĕркине упрани, ăна ăруран ăрăва куçарни – пархатарлă ĕç. Çын укçа-тенкĕне кăна пуян мар, ăна чун апачĕпе хавхаланăвĕ те питĕ кирлĕ. Çакăн пек чухне вара ĕçлес кăмăл та çĕкленет, пĕр-пĕрин ăнланăвĕ те сывăхланать, юрлас-ташлас килет. Акă çаксене тĕпе хурса Оринински Культура çуртĕ çумĕнчи «Шуракăш» юрăпа ташă ансамблĕ тата «Орин ен» ветерансен хорĕ хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарма куракан умне тăтăшах тухаççĕ. Çавăн пекех тĕрлĕ конкурссене, фестивальсене хутшăнса çĕнтерӳçĕ пулса таврăнаççĕ. Икĕ ушкăн вара хĕрĕх ытла çынна пĕрлештерет. Кашниех чăн-чăн юрă-ташă ăсти, пирĕн артистсем чылай мероприятие илем кӳреççĕ.

Çак кунсенче эпир Красноармейски районĕнче иртнĕ регионсем хушшинчи фестиваль-конкурса хутшăнтăмăр. Эпир район чысне хӳтĕлеме тивĕç пултăмăр. Ку пирĕншĕн пысăк хисеп пулчĕ.

Фестиваль-конкурс Чăваш Республикин Пуçлăхĕн грантне тивĕçнĕ «Тусăмсене юрăкĕвĕпе савăнтарар» çĕнтерӳçĕ проект шайĕнче иртрĕ. СССР патшалăх премийĕн лауреачĕ, Раççей халăх артисчĕ, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин искусствоин ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, композиторĕ Ф. Лукин çуралнăранпа 100 çул çитнипе çыхăннă. Кунта ытларах Филипп Миронович юррикĕвви янăрарĕ. Паллах, çакă ăна сума суни пулчĕ. Фестиваль-конкурса çак районта ирттерни ахаль мар: композитор Красноармейски районĕнче кун çути курнă. Искусство ĕçченĕ 800 яхăн юрă хайланă. Фестиваль-конкурса алă ушкăн хутшăнчĕ.

Иртнĕ тапхăрта пысăк ăсталăхпа палăрнисене вара Шупашкар хулинчи Чăваш патшалăх филармонийĕ пуçтарчĕ. Кунта Чăваш Республикинчи 2012 çулхи культура ĕçĕсен пĕтĕмлетĕвĕн марафонĕ пулчĕ. Çапла вара çӳллĕ шайри гала-концерта пирĕн ĕçе пысăка хурса хакларĕç. Эпир виççĕмĕш степеньлĕ лауреат пулса таврăнтăмăр. Çавăн пекех укçан хавхаланăва тивĕçрĕмĕр. Пирĕ çапла сума суни татах та кăтартулларăх, пултаруллăрах ĕçлеме хистет.

Куракан умне хăш шайра тухасси, юрă-ташă ăсталăхĕ, паллах, художество пултарулăх ертӳçинчен нумай килет. Кунта манăн чи малтан Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченне, Чăваш Республикин композиторсен ассоциацийĕн членне В. Александрова, çавăн пекех Культура çуртне килекен кашни çынна пысăк тав сăмахĕ калас килет. Халĕ вара эпир çитсе килекен уявсене хатĕрленетпĕр.

**В. ВАСИЛЬЕВА,**
**Оринински Культура çуртĕн ертӳçи.**

# Пурнăç чăнлăхне сăнлать

Çĕнĕ кĕнеке




***Çак кунсенче Василий Максимович Пузыревăн (Ӳрмек Васлейĕн) «Сартон» кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Пирĕн вулакан ăна район хаçатĕнче пичетленнĕ «Сартон» трагедилле новеллин пайĕсем, ытти сăвă-хайлавĕсем тăрăх пĕлет ĕнтĕ.***

***Кĕнеке авторĕ – пултаруллă педагог, вĕрентӳ йĕркелӳçи, Раççей вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ. Кĕнекене «Сартон», «Пул эс арçын» поэмăсемсĕр пуçне «Ачалăх», «Тĕнче тытăмĕ», «Юрату кĕввисем», «Пурнăç аваăрĕ» сăвă ярăмĕсем, юптарусемпе култармăшсем те кĕнĕ. Паян вулакансене авторăн кĕнекери хăш-пĕр хайлавĕсемпе паллашма сĕнетпĕр.***

Хĕвел шевли пулчĕ.
Ирĕлсе туту сан
Тутамран чуп турĕ.
Чĕвĕн тăнă эпĕ,
Пĕлĕте кармашнă:
Пурнăç эсĕ манăн,
Санпала варлашнă.
1984.

Тамăк çывхарать.

Мĕлке çывхарать.
Ăш пăтранать.
Сур питĕнчен.

Хĕсĕр хирте тăлăх путене
Авăтать татти-сыпписĕр.
Чуна тăвăр.
17. 06. 2009.

## 17-ри хĕр

Ак каллех эп санпа
Тĕл пулма васкатăп.
Чечек сапнă çаран
Варрипе чупатăп:
Ман пуласлăх эс,
Ман телейĕм эс!
Вун çиччĕри савăш,
Тăхтасамччĕ çеç…
Хура çӳçлĕ йĕкĕт
Куçăмран чăр! пăхрĕ.
Эп кăна илтмелĕх
Çепĕç пăшăлтатрĕ:
«Пин-пин тĕслĕ ырă
Чечек çыххине
Пуç вĕçне эп хутăм,
Чăмрăм ытамне».
Ярапаллă ярăм

## Хӳхлев

Ырми-канми хăват
Хресчен пуянлăхĕ –
Тăварлă тар.

Тăвăр ункă –
Ятсăр çăлăнăç.
Хĕвел сӳнет.

Сана куртăм –
«Кăвак хуппи» уçăлчĕ.
Сивĕ çутă.

Тăшману сывлăх сунчĕ –
Кавар çуралнă.
Сыхă пул.

Вучахра кăвар сӳннĕ:
Çемье ăшши çук.
Тăрлавсăрлăх хуçаланать.

Кун-çул таппи
Çын кусĕнчен пăхтарать:

## Пуçлăх суйлаççĕ

Юптару

– Ах, еплерех пуплет çав тилĕ, –
Киленчĕ шур аяк – чакак.
– Мĕнле йăлтăртатать ун тумĕ! –
Ăмсанчĕ çывăхри курак.

– Ура чĕрни хĕскĕч пек çивĕч, –
Тутисене çуллать кушак.
– Çĕклер алла: пулма вăл тивĕç
Чăн-чăн хуçа, – хушать ашак.

– Шанатпăр пĕр сана, пĕр эсĕ...
Эй, Турăçăм, пилле тилле!
Çĕн пуçлăха çĕн пыл чĕресĕ, –
Хремеслепет упа, – сипле...

Авалтан тилле пурте пĕлетпĕр,
Çав-çавах ăна куçпа тĕллетпĕр.
1996.

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă, ырă кăмăллă аттене, хуньăстарике, кукаçие, тăванăмăра – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Виталий Васильевич НИКИТИНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чунчĕререн ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр, эс пурришĕн савăнатпăр. Пире, ачусене, çуратса тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн чунтан тав тăватпăр.

**Салампа: мăшăрĕ Галина Александровна, хĕрĕсем, ывăлĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем.**

Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Юрпаш ялĕнче пурăнакан **Галина Петровна ПЛАТОНОВĂНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе чунчĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, канлĕ ватлăх, нумай-нумай пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр. Ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: Купăрляри Гальăпа Миша.**



Купăрля ялĕнче пурăнакан **Римма Никитична ВАСИЛЬЕВĂНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр.

Ан чирле, ан ватăл нихăçан,
Пул хаваслă, кăмăллă ялан.
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма вăй-хал парса тăрать.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем тата кĕçĕн мăнукĕсем.**

Юратнă йăмăкпа кĕрĕве, аппапа йыснана – Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракассинче пурăнакан **Елена Петровнăпа Александр Алексеевич ПАВЛОВСЕНЕ** çуралнă кунĕсемпе чĕререн саламлатпăр. Тăванăрсемпе туслă пурăнма, ачăрсене таса та сывă пăхса çитĕнтерме ырлăх-сывлăхпа вăй-хăват сунатпăр. Турри пиллĕх патăр сире.

**Пысăк салампа: аслă пиччӳпе инкӳ, Вальăпа Олег тата Артур, Таня, Марина.**



Юнкă ялĕнче пурăнакан юратнă аннене, хуньамана, кукамая – **Нина Ивановна ИВАКОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Ĕçрен те, çынна пулăшасран та пăрăнманскере малашне те тулли пурнăç, çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе ывăлĕсем, кинĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**



Раштавăн 7-мĕшĕнче Ярапайкассинчи вăтам шкул директорĕн – **Николай Васильевич КУДРЯШОВĂН** – 60 çулхи юбилейĕ.

